**Истори манăçмасть**

# Пĕр тĕллевпе ĕçлеççĕ кунта

Турайĕнчи фельдшер пункчĕ 1924 çултанпа ĕçленĕ. Вăл хăйĕн «тăванĕсем» хушшинче чи асли тесен те йăнăш мар. Çакăнта фельдшер пункчĕ уçăлни çынсемшĕн çав тери аван пулнă. 1930 çулта вара амбулатори уçнă кунта. Халĕ пурте пĕлекен Турайри участок больници 1959 çулта хута кайнă. Çак йывăç çуртра ача-пăча çуратмалли уйрăм та 1977 çулччен ĕçленĕ. Вăхăт иртнĕ çемĕн кунта 50 вырăнлăх çĕнĕ çурта хута яраççĕ. Лаборатори тата поликлиника «хӳтлĕх» тупаççĕ çакăнта. 1986 çулта Турайра васкавлă пулăшу уйрăмĕ те уçăлать. Тепĕр çулталăкран поликлиника та çĕнĕ çурта вырнаçать. 6 çул каялла вара Турайри участок больницинче те пĕтĕмĕшле практика врачĕн пӳлĕмĕ çынсене йышăнма тытăнчĕ.

Хальхи вăхăтра çак сывату учрежденийĕнче виçĕ врач чирлисене тăтăшах йышăнать: пĕтĕмĕшле практика врачĕ В.В. Толстова, участок терапевчĕ В.В. Толстов тата С.Ю. Павлова.

Больницăра нумай çул хушши тĕп врач пулса В.Г. Майоров ĕçленĕ. Малтан Хусанта ĕçленĕскер, вăл кайран Турайĕнче 30 çул, тивĕçлĕ канăва тухиччен тăрăшать. Вĕренсе тухнă çамрăксене ĕçлеме вырнаçтарать. Хăшĕсем халĕ те ĕçлеççĕ. Тĕслĕхрен, Л. Лебедева медсестра Свердловскра вĕреннĕ хыççăн Шупашкарта ĕçленĕ. 1984 çултанпа вара Турай больницинче чирлисене сыватас ĕçе пысăк тӳпе хывать. «Алли çăмăл» теççĕ ун пирки чирлисем. 1976 çулта Шупашкарта вĕренсе пĕтернĕ Т. Михайлова та 1984 çултанпа çакăнта вăй хурать. Унăн ĕç стажĕ те 30 çула яхăн.

Сахал мар пултаруллă медиксем кунта. Е. Водниковапа В. Петрова санитаркăсем те тахçантанпах ĕçлеççĕ. Г.Игнатьевапа Л. Кузнецова та чирлисемпе яланах кăмăллă. Санитаркăсем тăрăшнипе ĕнтĕ больница палатисенче тирпейлĕ, яланах таса.

Р. Харкова медсестра та Турайри больницăра нумай çул ырми-канми тăрăшать. Пуян опыт пухнисемпе пĕрлех çамрăксем те хăйсене лайăх енчен кăтартаççĕ: Г. Белова аслă сестра кунта хисепе тивĕçнĕ ĕнтĕ. Чирлисене Турай больницинче эмелсемпе, уколсемпе кăна сыватмаççĕ, ăшă сăмахсем, тимлĕх шеллемеççĕ медработниксем.

Васкавлă пулăшу уйрăмĕнче ĕçлекен мĕн пур ĕçченсене те пур çын ячĕпе тав сăмахĕ калас килет. Темĕнле вăхăтра та, темĕнле çанталăкра та Турайсем çула тухаççĕ, ырă кăмăлпа туса пыраççĕ хăйсен ĕçне. Чĕннĕ çĕре хăвăрт çитеççĕ, часах пулăшу параççĕ.

Турай больницинче ĕçлекенсем пурте пĕр çын пек пулса – врачсенчен пуçласа санитаркăсем таранах – чирлисене тысăк тимлĕх уйăраççĕ. Пурин те пĕр тĕллев – сыватасси. Манăн вĕсене çӳлти уйăхпа, çутă уйăх тавра вăй вылякан çăлтăрсемпе танлаштарас килет. Кунта вăй хуракан хĕрарăмсене пурне те анчах иртнĕ çуркуннен чи илемлĕ уявĕпе – Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Таса сывлăх, ĕçре ăнăçу, килте килĕштерӳ сунатăп.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**
Кĕртекасси ялĕ.

**Районăн паллă çыннисем**

# Халăха кирлĕ ĕç тăвать

Юлашки вăхăтра республикăра кăна мар, пирĕн районти таврапĕлӳçĕсем те хăйсен пархатарлă ĕçне самаях вăйлатнине палăртмалла. Район историйĕпе е пĕр-пĕр ял историйĕпе çыхăннă кĕнекесемпе брошюрăсем нумайланчĕç. Пирĕн Муркаш тăрăхĕнчи паллă çынсем çинчен тунă тĕпчевсем те хушăнсах пыраççĕ. Апла пулсан таврапĕлӳçĕсем тăван халăхăн историне, йăли-йĕркисене манма памаççĕ, интереслĕ тĕпчев материалĕсене пухса ĕлĕкхипе хальхи вăхăтсен çыхăнăвне тăсаççĕ.

Пирĕн тăрăхри паллă таврапĕлӳçĕсенчен пĕри вăл – Иван Димитриевич Вязов. Чуманкассинче пурăнакан çак хисеплĕ çын тивĕçлипех чи сумлисен йышĕнче. Хăй Атапай ялĕнче çуралса ӳснĕ пулин те, Чуманкасси ял тăрăхĕн историне тĕплĕ тишкерсе 2003-мĕш çулта «Апаш» ятлă кĕнеке кăларма пултарчĕ. Çак кĕнекепе вара халĕ пирĕн библиотекăра шкул ачисенчен пуçласа ватă çынсем таранах – пурте усă кураççĕ. Тăван ял мĕнле пуçланса кайни, унта мĕнле çынсем пурăнни интереслĕ мар-и-ха? Паллах, интереслĕ. Юлашки вăхăтра шкул ачисем çак ыйтупа нумайрах интересленме тытăнни курăнать. Çавăнпа И. Вязовăн кĕнекисемпе вĕсем час-часах усă кураççĕ, интересленнĕ май хăйсем те ваттисенчен мĕн те пулин çĕннине ыйтса пĕлме тăрăшаççĕ. «Апаш» кĕнеке – Иван Димитриевичăн пысăк тата питĕ усăллă тĕпчев ĕçĕ.

Çак кĕнеке хыççăн тепĕр 3 çултанах таврапĕлӳçĕн «Дорогие имена» кĕнеки кун çути курчĕ. Учительсен династийĕсем пирки пырать сăмах ку кĕнекере. Вăл та Чуманкасси ял тăрăхĕпе çыхăннă. Анчах районти паллă ăсчахсем çинчен те вуласа пĕлме пулать унта.

И.Д. Вязов мĕн тивĕçлĕ канăва тухнăранпах тĕпчев ĕçĕнче. Халĕ сакăр вуннăран иртнĕ ватă хăйĕн ачалăх вырăнĕсем пирки пысăк ĕç çырать. Ĕçĕ пирĕн район çыннисемшĕн интереслĕ пуласси иккĕлентермест те. Мĕншĕн тесен Иван Димитриевич – хăйĕн ĕçне чунран парăннă таврапĕлӳçĕ. Çакна унăн кĕнекисемпе статйисенче çеç мар, хăйĕнпе тĕл пулса калаçнинче те лайăх курма пулать. Хамăр халăха, чăвашлăха юратни, унăн йăли-йĕркисене хисеплени хистет те ĕнтĕ Иван Димитриевича çĕнĕрен те çĕнĕ тĕпчевсем туса материалсем пухма. Çак материалсем вара пирĕншĕн, чăнах та, мулпа тан. Хамăрăн ватă асаттесем епле пурăннине пирĕн кăна мар, малаллахи ăрăвăн та пĕлмелле-çке. Иван Димитриевичăн ĕçĕсем шăпах пĕлӳ çăлкуçĕ пулса тăраççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, çакнашкал тĕпчевсем пирĕн халăха питĕ кирлĕ.

**З.ИВАНОВА, Чуманкасси ял библиотекин библиотекарĕ.**

**Официально**

**Чувашская Республика Моргаушский район**
**Собрание депутатов**
**Москакасинского сельского поселения**
**РЕШЕНИЕ**
**05.03.2009 г. № С-28/2**

д.Москакасы

**Об официальных источниках опубликования муниципальных правовых актов Москакасинского сельского поселения**

В соответствии со статьей 17 Федерального закона от 06.10.2003г. N 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», статьей Закона Чувашской Республики от 18.10.2004г. N19 «Об организации местного самоуправления в Чувашской Республике» и в целях опубликования муниципальных правовых актов и иной официальной информации Москакасинского сельского поселения Моргаушского района

Собрание депутатов Москакасинского сельского поселения решило:

1. Установить, что официальным опубликованием муниципальных правовых актов Москакасинского сельского поселения считается первая публикация их полного текста в «Вестнике Моргаушского района» или районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

2. Определить официальным сайтом для размещения муниципальных правовых актов Москакасинского сельского поселения сайт Москакасинского сельского поселения Моргаушского района ЧР.

3. Опубликовать настоящее решение в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

4. Контроль за исполнением настоящего решения возложить на постоянную комиссию Собрания депутатов Москакасинского сельского поселения по законности, правопорядку.

**Глава Москакасинского сельского поселения**
**М.М. ПУШКИН.**

**Ăмăртăва чĕнетпĕр**

## Район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илме васкăр

Мартăн 14-мĕшĕнче йĕлтĕрпе чупса район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăрту иртет. Вăл йăлана кĕнĕ вырăнта – йĕлтĕр базинче пулать. Ăмăрту 10 сехет çурăра пуçланать.

Командăра 18 çултан иртнĕ 2 арçынпа 2 хĕрарăм пулмалла. Эстафета çакăн пек иртет: 1-мĕш тата 3-мĕш этап – хĕрарăмсем 2-шер км, 2-мĕш тата 4-мĕш этап – арçынсем 3-шер км. Çавăн пекех VIP-чупу та пулать. Ку дистанци – 2 км.

Пур организацисемпе предприятисен, учрежденисемпе ял тăрăхĕсен, хуçалăхсен тата район администрацийĕн пайĕн командисене те йыхравлатпăр.

## Быков парнисемшĕн

Çатракассинчи вăтам шкулта Хуракасси выççăлккинче çуралса ӳснĕ, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă Александр Артемьевич Быков ячĕпе унăн тăванĕсем тата «Свобода» хуçалăх çирĕплентнĕ кусса çӳрекен кубока çĕнсе илессипе ялти шкулсен спартакиадине ирттересси Çатракасси ял тăрăхĕнче ырă йăланă кĕнĕ ĕнтĕ. Кăçал вара çак ăмăрту район шайне тухать. Кун пирки калакан положение иртнĕ кунсенче район администрацийĕнче çирĕплетнĕ. Ăмăрту Çатракассинчи вăтам шкулта пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче 9 сехетре пуçланать. Ăмăрту программинче: волейбол (командăра 3 арçын, 3 хĕрарăм), шашкăлла вылясси (пĕр арçынпа 2 хĕрарăм), шахматла вылясси (2 арçынпа пĕр хĕрарăм), сĕтел çи теннисĕ (пĕр арçынпа 2 хĕрарăм), йĕлтĕр эстафети (2 арçын 3-шер км, 2 хĕрарăм 2-шер км).

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

## Тав тăватпăр

Шарпаш ялĕнче пурăннă тата пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă Любовь Витальевна Маркована юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн А.А. Григорьев, Н.А. Павлов предпринимательсене, Муркаш райповне, Колесниковсен çемйине, тăвансене, ял-йыша тав сăмахĕ калатпăр.

**Марковсен çемйи.**

**Спорт хыпарĕсем**

## Муркашсем – пĕрремĕшсем

Мартăн 5-8 мĕшĕсенче Шупашкарти 2 № Олимп резервĕн шкулĕ çумĕнче республикăри спорт шкулĕсем хушшинче йĕлтĕрпе чупассипе ăмăрту иртнĕ. Пурĕ унта 15 команда вăй виçнĕ.

Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн команди (45 çын) те Шупашкарта ăмăртнă. Шкул тата район ятне Калайкасси тата Ярапайкасси уйрăмĕсен çамрăк спортсменĕсем хӳтĕленĕ. Вĕсене хатĕрлекенĕсем – Эдуард Александрович Гордеев аслă тренер тата Альбина Семеновна Дашковапа Виталий Тимофеевич Моисеев тренер-преподавательсем.

Çак наставниксем тата вĕсен воспитанникĕсем тăрăшса ĕçленипе, ашшĕ-амăшĕсем пулăшса пынипе те ăмăртура Муркашсен пĕрлештернĕ команди 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ, куçса çӳрекен кубока тивĕçме пултарнă. Ăмăртура Стас Васильев тата Ирина Иванова 1-мĕш вырăнсене, Алексей Моисеев, Артем Баранов, Дина Замятина 2-мĕш вырăнсене тухнă. Джамиля Баранова 2-мĕш тата 3-мĕш вырăнсем, Вероника Кожанова 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Малалла та тренерсемпе çамрăк спортсменсене ăнăçусем сунатпăр!

**ХАМĂР ИНФ.**

## «Сендрух» команда çĕнтерчĕ

Спорт пирĕн пурнăçра паллă вырăн йышăнать. Çакна ăнланакансем вара спортăн тĕрлĕ енĕпе çывăхланса ӳт-пĕве çирĕплетеççĕ. Акă февралĕн 20-мĕшĕнче Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн спортзалĕ волейбол вăййин тусĕсене йыхравларĕ. Çак кун волейбол вăййин ветеранĕн Георгий Егорович Лукинăн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Кăçалхипе вăл иккĕмĕш хут пулчĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, самай йышлăн килсе çитрĕç ăмăртăва хутшăнма. Етĕрне районĕнчи спортсменсем те йыхрава хапăл тусах йышăнчĕç. Пĕтĕмпе вара 11 шкулта вĕренекенсем хутшăнчĕç. Ăмăртăва хĕрӳлетме, çӳллĕ шайра ирттерме çакă татах та хавхалантарчĕ. Командăсем ăмăртăва тивĕçлипе хатĕрленни хĕрӳ кĕрешӳре курăнчĕ. Çапах та Чăваш Республикин спорт министрĕ А.Николаев алă пуснă пĕрремĕш степеньлĕ диплома «Сендрух» волейбол команди тивĕçрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕшсем Оринин тата Советски (Етĕрне) шкулĕсенче вĕренекенсем пайларĕç. Малти вырăнсене тивĕçнисене асăнмалăх парнесем парса та чысларĕç. Ăмăрту тĕрлĕ номинацисенче иртни те выляксене хавхалантарчĕ.

Паллах, массăллă мероприятисене укçа-тенкĕсĕр ирттерме çук. Çавăнпа та спонсорсене ятран асăнса тав сăмахĕ каласа хăварас килет. Чи малтанах Муркашри чăх-чĕп фабрикин ертӳçине Н.Г. Ванеркина, Ильич яч. хисепленекен хуçалăх ертӳçине И.В. Николаева ырăпа асăнар. Çавăн пекех уйрăм предпринимателе И.Н. Никитина тата Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхне В.И. Егорова тав сăмахĕ каламалла. Пĕтĕм ĕç-хĕле йĕркелекенĕ вара Г.Е. Лукин тренер пулчĕ. Вăл волейбол енĕпе 1-мĕш категориллĕ судья, çар кĕрешĕвĕпе – спорт мастерĕн кандидачĕ. 1962 çулта çак шкулта вĕренсе тухнăскер, халĕ кунтах волейбол ăсталăхне вĕрентет. Февраль уйăхĕнче Георгий Егоровичăн çуралнă кунĕ пулчĕ, эпир ăна çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Г. ПАВЛОВ.**

## Спортпа туслăх уявĕ

Нумаях пулмасть Атапай шкулĕнче кунти попечительсен канашĕн ертӳçи, спорт мастерĕ Ю.И. Ковалев тата физкультура учителĕ И.В. Воробьев йĕркеленипе тĕрлĕ енпе вăй виçессипе ăмăртусем иртрĕç. Унта Атапай шкулĕпе пĕрлех ытти хăш-пĕр шкулсенчен те спортпа туслисем хутшăнма кăмăл турĕç. Ăмăртусене спорт мастерне Михаил Музыкова халалланă.

«Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» ăмăрту уйрăмах интереслĕ иртрĕ. Ку ăмăртăва кĕçĕн классен учителĕсем Е.Н. Музыковапа С.Г. Вязова ертсе пычĕç. Кунта Колбасовсен, Соколовсен, Кулаковсен, Петровсен тата Музыковсен çемйисем хутшăнма кăмăл турĕç. Командăсем йĕлтĕрпе чупассипе тата эстафета вăййисенче хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Спортра туслăх çĕнтерет тесе ахаль каламан. Ăмăртăва хутшăнакансенчен никам та парнесĕр юлмарĕ. Çĕнтерӳçĕсем дипломсемпе медальсене тата парнесене тивĕçрĕç.

**С. ВЯЗОВА, Е. МУЗЫКОВА.**

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**В соответствии с графиком выездных приемов ответственными работниками Отделения Пенсионного фонда Российской Федерации по Чувашской Республике на первое полугодие 2009 года 17 марта выездной прием проводится в Управлении ПФР в Моргаушском районе.**
**На прием можно записаться заблаговременно лично в клиентской службе либо позвонить по тел.: 62-8-91.**
**Начало приема в 9.30.**

**ООО «Интертехсервис»**
**Изготовление проектов и смет на строительство и снабжение газом, водой, электроэнергией жилых домов и производственных объектов. Тел.: 62-6-03, 62-1-80; адрес: с. Моргауши, ул. Мира, 9 (здание редакции).** Лиц.ГС-4-21-02-1026-0-2112000972-004901-1 2-3.

**ЦЕМЕНТ – М-400**
**40 кг – 160 руб.**
**«Моргаушагропромснаб»**
**Тел.: 8-903-346-40-58.** 4-5.

**Калайкасси ялĕнче икĕ çăм арманĕ ĕçлет. Ирхи 7 сехетрен пуçласа, кашни кун, кану кунĕсĕр, апрелĕн 1-мĕшĕччен.**
**Продаю сено луговое, тюкованное.**
**Тел.: 8-960-311-55-72, 65-2-33.** 2-2.

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР**
**с установкой, регистрацией и обслуживанием.**
**Тел.: 8-905-345-77-19.** 2-6.

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.**
**Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Николаева Н.Н.**
**Номер подписан 10.03.2009 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3860.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.